25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 7 ЫТЛАРИКУН 156 (6091) №

Ҫӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли—ӑшӑ тумтирсем

Пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв пӗрлӗхлӗ ҫар лагерӗ пулса тӑнине, фронтпа тыл иксӗлми таччӑн ҫыхӑнса тӑнине, совет ҫыннисен ҫулӑмлӑ патриотизмӗ кунран-кун вӑйланса пынине кӑтартакан паха тӗслӗхсенчен пӗри вӑл—хамӑрӑн фронтри воинсем валли ӑшӑ тумтирсем пухни пулса тӑчӗ.

Халӑх хӑйӗн воинӗсене ӑшӑ тумлантарса, иртнӗ хӗллехи хаяр сивӗсем тӑнӑ условисенче фронтӑн чылай участокӗсенче Хӗрлӗ Ҫара хӑватлӑ наступлени тума май пачӗ. Иртнӗ ҫулта ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе туса ирттернӗ ӗҫ пирӗн халӑхӑн ку енӗпе пысӑк пуянлӑхсем пуррине кӑтартрӗ.

Иртнӗ кӗркуннепе хӗллехи уйӑхсенче тунӑ ӗҫсен итогӗсене пӗтӗҫтерсе, пирӗн ӗҫҫыннисем халӗ фронтри боецсем валли ӑшӑ тумтирсемпе кӗпе-йӗмсем пухас ӗҫе малалла тума тытӑнчӗҫ. Кӑҫалхи июнь уйӑхӗнче кӑна пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем ҫӗнӗрен 1.700 тир, 850 килограмм ҫӑм, 44 кӗрӗк пиншак, 240 мӑшӑр ҫӑматӑ, 129 мулаххай, 354 мӑшӑр алшиш, 200 алшӑлли т. ыт. те пухнӑ. Октябрьски районра иртнӗ уйӑхра ҫӗнӗрен 428 тир, 180 килограмм ҫӑм, 38 мулаххай, 89 мӑшӑр ҫӑм алшиш, 73 алшӑлли пухнӑ.

Ҫак ыйтупа Октябрьски районра колхозниксен, предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлекенсен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав пухусенче иртнӗ ҫулти ӗҫсене пӑхса тухаҫҫӗ, ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ, ӑшӑ тумтирсем пухас енӗпе ӗҫлекен комиссисене ҫӗнетеҫҫӗ, фронта кайнӑ членсене улӑштараҫҫӗ, начар ӗҫлекен комисси членӗсем вырӑнне активлӑ ҫынсене суйлаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Шӑхасан районӗнче те хӑшпӗр колхозсенче ҫак ыйтӑва хускатнӑ. Ҫӗнӗ Пинерти «Пинер» колхозра ҫак ыйтупа пуху туса ирттернӗ хыҫҫӑнах ӗҫе тытӑннӑ. Унта паянхи куна ҫӗнӗрен 32 тир, 6 мӑшӑр алшиш, 5 мӑшӑр чӑлха, 6 алшӑлли, 7 простыня пухса хатӗрленӗ. Уйрӑм колхозниксем: С. Варфоломеев 2 тир, 50 тенкӗ укҫан, М. Кузьмина—пӗр тир, пӗр алшӑлли, пӗр мӑшӑр чӑлха, А. Петрова—пӗр тир, пӗр алшӑлли панӑ. «Пинер» колхоз хӑй 14 килограмм ҫӑм панӑ.

Элӗк районӗнчи «Красный флаг» колхозӑн членӗ Емельянова юлташ, ӑшӑ япаласем парса, ҫапла каланӑ:

— Манӑн виҫӗ ывӑл фронтра фашистсене хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ, эпӗ хамӑн тӑван боецсене пулӑшма тивӗҫлӗ,—тенӗ.

Ҫав колхозра 65 ҫулти В. Никитина колхозница 500 грамм ҫӑм панӑ. Кӗске вӑхӑт хушшинчех колхозра 7 килограмм ытла ҫӑм, 6 алшӑлли, 300 тенкӗ укҫа пухнӑ.

Ҫакӑн пек тӗслӗхсене татах та кӑтартса пама пулать. Анчах чылай ҫӗрте ҫуллахи уйӑхсенче фронтри боецсем валли ӑшӑ тумтирсемпе кӗпе-йӗмсем пухас ӗҫе вӑйсӑрлатрӗҫ, вырӑнӗ-вырӑнӗпе пачах та ӗҫлеме пӑрахрӗҫ. Ку вӑл чи малтан ҫак тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссисене пырса тивет. Ӗҫҫыннисем фронта пулӑшас ӗҫре пӗр кунлӑха та чарӑнса тӑмаҫҫӗ, ӑшӑ тумтирсене те вӗсем чылай ҫӗрте малалла пухса параҫҫӗ. Халӑхӑн пуҫарулӑхӗ нихҫан та сӳрӗлмест. Ҫав пуҫарулӑха куллен ертсе, организацилесе пыни кирлӗ.

Парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен районри, ҫавӑн пекех вырӑнсенчи комиссисен составӗсене пӑхса тухмалла, вӗсене ҫӗнетмелле, ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫре чи паха тӗслӗхсем кӑтартнӑ хастарлӑ ҫынсене комисси членӗсене суйламалла.

Ҫак питех те кирлӗ ыйту тавра массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне вӑйлатмалла. Кашни колхозник, рабочи, служащи хӑй ҫине ҫӗнӗ обязательство илтӗр. Ҫав обязательствӑсене вара ҫийӗнчех пурнӑҫа кӗртме тытӑнмалла. Ку ыйтупа колхозсемпе бригадӑсенче пухусем туса ирттернисӗр пуҫне, ятарласа стена хаҫачӗсем кӑларсан аван пулнӑ пулӗччӗ.

Ҫавӑн пекех тӗнчери тата ҫӗршыври политикӑллӑ событисем ҫинчен, пирӗн боецсен фронтри геройла кӗрешӗвӗ ҫинчен уйрӑм калаҫусем туса ирттерни те ҫак ӗҫре нумай пулӑшать. Кунта ӑшӑ тумтирсем пухас ыйтӑва хальхи вӑхӑтри политикӑллӑ пысӑк ыйтусемпе ҫыхӑнтарма пӗлни кирлӗ.

Хӑшпӗр ҫӗрте ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе пӗр енлӗ ӑнланаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вара боецсене куллен кирлӗ япаласем—аялтан тӑхӑнмалли кӗпе-йӗмсем, алшӑллисем, чӑлхасем пухас енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Пухнӑ ӑшӑ япаласене лайӑх пӑхса усрасси, вӗсене кӗве ҫиесрен, йӗпенсе пӑсӑласран сыхласси—япаласем пухас ӗҫ пекех ответлӑ задача пулса тӑрать. Пухнӑ япаласене боец патне тӗрӗс ситересси ҫине тӑрса тӑрӑшмалла.

Пирӗн колхозсемпе колхозниксен, рабочисемпе служащисен хӑйсен фронтри тӑванӗсене пулӑшма мӗн кирли пурте тупӑнать. Ҫав пулӑшӑва организацилемелле, ертсе пымалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июлӗн 5-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июлӗн 5-мӗшӗнче **Курск** енче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе пехотине хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Белгород тата **Волчанск** енӗсенче противника хирӗҫ ҫаплах вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Иртнӗ эрне хушшинче июнӗн 28-мӗшӗпе июлӗн 4-мӗшӗ хушшинче—сывлӑшри ҫапӑҫусенче, аэродромсем ҫинче тата зенитнӑй артиллерирен персе, нимӗҫсен 380 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн 187 самолет пӗтнӗ.

* * *

Июлӗн 4-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен темиҫе вуншар танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 180 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 30 лавне, тракторпа турттарса пыракан 4 йывӑр орудине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 4 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Курск енче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен вӗҫӗ-хӗррисӗр тӑвакан атакисене сире-сире яраҫҫӗ. Противник питех те пысӑк ҫухатусем тӳсет, вӑл ҫапӑҫӑва хӑйӗн резервӗсене кӗртсе пырать. Участоксенчен пӗринче пирӗн танксен чаҫӗ гитлеровецсен темиҫе атакине сирсе янӑ, нимӗҫсен 24 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра противникӑн пехоти икӗ кун хушши ӗнтӗ халӑх пурӑнакан пӗр пункта атакӑлать. Халӑх пурӑнакан ҫав пунктшӑн пыракан ҫапӑҫусенче пирӗн боецсем 700 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, 3 танк, 5 оруди, 14 пулемет тата миномётсен 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белгород енчи участоксенчен пӗринче нимӗҫсем, пысӑк ҫухатусем тӳссе, пирӗн оборонӑна савӑлланса кӗнӗ. Флангсенчен пырса ҫапса, пирӗн пехотинецсемпе танкистсем гитлеровецсене пысӑк ҫухату тӳстернӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен ҫӗршер вилли выртса юлнӑ. Танксене хирӗҫ пемелли пӑшалсен подразделенийӗ нимӗҫсен 6 танкне ҫунтарса янӑ тата ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫ пехоти, 16 танк пулӑшса пынипе, пирӗн малти подразделенисене атакӑласа, халӑх пурӑнакан 2 пункта йышӑнса илнӗ. Пирӗн чаҫсем контратака туса хӑйсен позицине каялла туртса илнӗ, противникӑн пехотине 3 батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен 2 танкне ҫӗмӗрнӗ. Тепӗр участокра пирӗн танксен ушкӑнӗ тӑшман пехотин батальонне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, 5 оруди, 3 пулемет, пӗр автобус тата штабӑн машинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Сафонов командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкӑнӗ тӑшманӑн тылне кӗрсе кайнӑ та А. ялӗ патӗнче засада тунӑ. Разведчиксем ҫӗрӗпех кӗтсе выртнӑ. Тул ҫутӑлнӑ вӑхӑтра ҫулпа нимӗҫсен 14 салтакӗ пынӑ. Гитлеровецсене засада вырӑнӗнчен темиҫе метр иртерсе ярса, пирӗн боецсем вӗсем ҫине пеме тытӑннӑ. 11 оккупанта вӗлернӗ, 3-шне тыткӑна илнӗ. Разведчиксем ручной пулемет, автомат тата 12 винтовка тытса илнӗ.

* * *

Гварди капитанӗ Родионов командир пулса тӑракан подразделенири зенитчиксем нимӗҫсен «Фокке—Вульф» йышши истребительне персе ӳкернӗ. Старши лейтенантсен Зверевпа Поповӑн батарейисем нимӗҫсен «Юнкерс—88» йышши бомбардировщикне персе ӳкернӗ.

* * *

Юлинцев командир пулса тӑракан чаҫри артиллеристсем виҫӗ кун хушшинче нимӗҫсен йывӑр миномечӗсен батарейине, пулеметсен темиҫе точкине, 4 автомашинине тата груз тиенӗ 5 лавне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 80 салтакӗ пирӗн гварди сержанчӗ Инютин командир пулса ертсе пыракан 5 боец хӳтӗленӗ рубежа атакӑланӑ. Противника ҫывӑха ярса, гвардеецсем ручной пулеметсенчен персе, унтан гранатӑсем ывӑтса, 60 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград облаҫӗнчи партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ противникӑн чугунҫул ҫинчи эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушенире войскӑсем ларса пыракан 3 класлӑ вагон тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 27 товарнӑй вагон ҫӗмӗрӗлнӗ. Нимӗҫ оккупанчӗсем 200 ҫынна ҫити пӗтнӗ.

Июлӗн 6-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 6-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле **Курск, Белгород** тата **Волчанск** енӗсенче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

* * *

Курск енче питӗ вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ, ҫав ҫапӑҫусенче противник питӗ пысӑк ҫухатусем тӳсет. Юлашки ҫапӑҫусенче ҫав енчи участоксенчен пӗринче пирӗн танкистсем нимӗҫсен пехотин пӗр полкне тата артиллери дивизионне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн танксен чаҫӗ нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна ҫити вӗлернӗ, темиҫе танка ҫунтарса янӑ, 16 станковӑй пулемет, 11 оруди тата 17 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн летчиксем активлӑн кӗрешеҫҫӗ. Пӗр талӑк хушшинче вӗсем нимӗҫсен темиҫе вуншар танкне, пехота турттарса пыракан 70 автомашинине ытла, 6 орудине пӗтерсе тӑкнӑ, сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 14 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче противникӑн пехоти танксем пулӑшнипе пирӗн оборонӑна савӑлланса кӗнӗ. Пирӗн артиллерипе пехота пӗр ҫӗре вӑйлӑн персе тӑнипе гитлеровецсене хӑйсен малтанхи позицийӗсем ҫине хӑваласа янӑ, ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен 200 вилли ытла выртса юлнӑ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен 3 танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн уйрӑм участокӗсенче кӗрешекен пирӗн чаҫсем икӗ кун хушшинче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллери противникӑн пехотин 3 ушкӑнне сапаласа янӑ, 9 дзота, 6 блиндажа, 3 наблюдательнӑй пункта ҫӗмӗрнӗ, полевой артиллерин 2 батарейине пусарса лартнӑ, темиҫе орудипе станковӑй пулемета пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Лейтенант Савельев командир пулса ертсе пыракан боецсен отрячӗ, тӑшманӑн тылӗнче кӗрешекенскер, нимӗҫсен Р. ялӗнче тӑракан гарнизонӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Красноармеецсем 80 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 2 пулемет, 2 автомат, 21 винтовка тата 2.000 патрон тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсем пирӗн артиллерин батарейине атакӑланӑ. Артиллеристсем ҫывӑхран тӗллесе персе нимӗҫсене питӗ пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Снарядсем пурте пӗтсессӗн, пирӗн боецсем старши политрук Степаненко ертсе пынипе штык вӗҫҫӗн ҫапӑҫма тытӑнса, противникӑн атакине сирсе янӑ.

* * *

Могилев облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрядри партизансен пӗр ушкӑнӗ 5 кун хушшинче нимӗҫсен 12 салтакне тата 8 офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, штабӑн 2 автомашинине тата 3 грузовой автомашинӑна ҫӗмӗрнӗ, 8 тонна бензина ҫунтарса янӑ. Ҫав отрядри партизансен тепӗр ушкӑнӗ противникӑн чугунҫул ҫинчи эшелонне крушени тунӑ.

* * *

Нимӗҫсен 102-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен тыткӑна лекнӗ салтак, поляк Валентин Б. ҫапла каласа панӑ: «1942 ҫулти март уйӑхӗн вӗҫӗнче мана Германи ҫарне илсе килчӗҫ те Мец хулине запаснӑй батальона ячӗҫ. Ҫав батальонри салтаксенчен 60 процентне яхӑн поляксем пулнӑ. Икӗ уйӑх вӗрентнӗ хыҫҫӑн пире фронта ячӗҫ. Ҫул ҫинче 6 ҫын тарчӗҫ, нумайӗшӗ тарма шутламарӗҫ. Эпир Мецрах ҫапла калаҫса татӑлнӑччӗ: Российӑна хирӗҫ ҫапӑҫмастпӑр, нимӗҫ офицерӗсене вӗлерсе пӗтеретпӗр те хамӑр пӑшалсене илсех вырӑссем енне куҫатпӑр, тенӗччӗ. Анчах фронтра поляксене тӗрлӗ чаҫсемпе подразделенисене ячӗҫ. Тыткӑна парӑнма эпӗ пӗччен килмен, манпа пӗрле тата манӑн юлташ А. Георг каҫрӗ. Польша халӑхӗ нимӗҫсене пӗтӗм чунтан кураймасть. Польша патриочӗсем нумайӗшӗ партизансен отрячӗсене кайрӗҫ. Партизансем пуринчен ытла Варшава, Лодзь тата Краков районӗнче активлӑн кӗрешеҫҫӗ».

* * *

Карели фрончӗн участокӗсенчен пӗринче противникран тытса илнӗ территори ҫинче совет боецӗн виллине тупнӑ. Медицина енчен пӑхни ҫакна кӑтартнӑ: гитлеровецсем ҫав красноармееца питӗ хытӑ асаплантарнӑ, унӑн хырӑмӗпе ар органӗсем тата пӗҫҫисем ҫинче хӗртнӗ вырӑнсем пур. Пуҫне мука япалапа персе шӑтарнӑ. Пӗтӗм ӳт-пӗвне штыксемпе чике-чике пӗтернӗ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ҪӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Районри ӗҫҫыннисем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума паянхи куна 85 пин тенкӗ ытла панӑ.

Турханти «Комбинат» колхоз членӗсем пӗтӗмпе 9.400 тенкӗ, Чӑвашторг отделенийӗнче ӗҫлекенсем 3.500 тенкӗ пухса панӑ. Комбинатри рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем боевой самолетсен звенине тума 30.500 тенкӗ хыврӗҫ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Харьков енӗ). **Ӳкерчӗк ҫинче:** Боецсем-железнодорожниксем нимӗҫсем ҫӗмӗрнӗ чугунҫул участокне юсаҫҫӗ.

Е. КОПЫТА фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Нимӗҫсен танксем нумай пӗтеҫҫӗ

КАНТАР-ХӖВЕЛАНАҪ ФРОНЧЕ, июлӗн 5-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Противник ҫапӑҫӑва танксемпе пехота тата авиаци нумай йышлӑн кӗртсе янӑ. Пирӗн танксен подразделенийӗ йышӑнса тӑракан вӑрман патне пымалли вырӑнта танксен хаяр ҫапӑҫӑвӗ пуҫланса кайнӑ. Нимӗҫсем ҫапӑҫӑва 50 танк кӗртнӗ. Вӑрмана хӗскӗчӗпе хӗссе илес, унтан вара ҫавӑрса илес тесе, тӑшманӑн машинисем ҫурункӑ пек йӗркепе пынӑ. Тӑшман, пирӗн артиллери вӑйлӑ путсулӑм тӑкнӑ ҫӗре пырса лекнӗ те, пӗр позици тытса илеймесӗрех 15 танк ҫухатнӑ. Нимӗҫ танкӗсенчен пӗр пайӗ малаллах шуса пынӑ. Ыттисем каялла чакмашкӑн ҫавӑрӑнма тытӑннӑ.

Пирӗн подразделени контратака туса, фашистсенне татах 12 танк пӗтерсе тӑкнӑ. Сыхланса юлнӑ машинӑсене хӳтелес тесе, противник хӑйӗн бомбардировщикӗсен пысӑк ушкӑнне янӑ. Анчах ҫав маневр ӑнӑҫлӑ пулман. Бомбардировщиксен тапӑнӑвне сирсе пӑрахнӑ. Нимӗҫсен 4 самолет пӗтнӗ.

Ҫав вӑхӑтрах нимӗҫ пехотин полкӗ, танксем пулӑшса пынипе, кӳршӗри подразделени ҫине ытканнӑ. Тӑшманӑн ҫынсемпе техника пирӗннинчен виҫӗ хут йышлӑрах пулнӑ пулин те, пирӗн боецсем хӑйсен позицийӗсене паттӑррӑн хӳтӗлесе хӑварнӑ. Гитлеровецсем йывӑр ҫухатусем тӳснӗ. Ҫак участокра тӑшман тепӗр хут наступлени туса пӑхни те ӑнӑҫсӑр вӗҫленнӗ.

Гитлеровецсем атакӑна 30 танк кӗртсе янӑ. Танксем ҫинче автоматчиксен десанчӗ ларса пынӑ. Танксене хирӗҫ пемелли тупӑсен лейтенант Сивцов командир пулса тӑракан батарейи темиҫе минута хушшинче нимӗҫсен малта пыракан 5 машинине пӗтерсе тӑкнӑ. Ытти танксем ҫийӗнчех каялла ҫавӑрӑннӑ.

Д. ЩУКИН.

Гитлеровецсем тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене вӗлереҫҫӗ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). Константиновка хулинчи лагерьтен тарса тухнӑ М. юлташ ҫапла каласа парать: малтанхи 6 кун хушши тыткӑна лекнисене пачах та апат ҫимерӗҫ. Выҫса ҫитнипе лагерьте кунсерен 15—20 ҫын вилет. Халран кайнипе ӳкекен ҫынсене нимӗҫсем персе вӗлереҫҫӗ. Гитлерла палачсем тыткӑнрисене массӑллӑн хӗнеҫҫӗ. Мӗн те пулин итлемесен, фашистла ирсӗрсем ҫав ҫынсене «айӑпа кӗнӗ» тесе персе пӑрахаҫҫӗ. Персе пӑрахас умӗн тыткӑнрисене хӑйсене валли шӑтӑк чавтараҫҫӗ.

Пӗррехинче конвоир тыткӑнри красноармееца, вӑл аякран иртсе пыракан хӗрарӑм хӳме урлӑ пӑрахнӑ ҫӑкӑр татӑкне илнӗ тесе, вырӑнтах персе пӑрахнӑ.

Нумай пулмасть нимӗҫсем Николаевка ялӗнчен Степановка ялне тыткӑнрисен пысӑк ушкӑнне куҫарнӑ. Ҫул ҫинче конвоирсем 150 ҫынна ытла персе вӗлернӗ.

Тыткӑнран тарнисем пурте ҫапла калаҫа параҫҫӗ: тыткӑна лекнисем тесе нимӗҫсем йӗри-таврари хуласемпе ялсенче пурӑнакан мирлӗ ҫынсене те лагере хӑвалса пухаҫҫӗ. Ҫапла, Константиновкӑри лагере фашистсем ремесло шкулӗнче вӗренекенсене, нимӗҫсем киличчен тухса кайма ӗлкӗрейменскерсене, хӑваласа хупнӑ.

Англипе Совет Союзӗ хушшинчи договор вӑя кӗнӗ

Июлӗн 4-мӗшӗнче Мускавра, Кремльре, Совет Союзӗн Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов тата Великобританин полномочнӑй посолӗ Арчибальд Кларк Керр гитлерла Германие тата вӑрҫӑра унпа пӗрле кӗрешекен ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси ҫинчен тата вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен Совет Союзӗпе Великобритани хушшинче тунӑ договора, Лондонра ҫак ҫулхи майӑн 26-мӗшӗнче алӑ пуснӑскере, ратификациленӗ ҫинчен калакан грамотӑсене улӑштарнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ ҫав договор, унӑн 8-мӗш статьи тӑрӑх, 1942 ҫулти июлӗн 4-мӗшӗнче вӑя кӗнӗ, Совет Союзӗпе Великобритани правительствисем хушшинче 1941 ҫулти июнӗн 12-мӗшӗнче тунӑ килӗшӳ вырӑнне пулса тӑнӑ.

Кӑпчанкӑ тымарӗсем пухас ӗҫе васкатмалла

КАНАШ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра ҫӗнтерӳ туса пыма Хӗрлӗ Ҫара боеприпассемсӗр пуҫне тата резина нумай кирлӗ. Эпир, вӑрман работникӗсем, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫар умӗнчи тивӗҫе туйса илсе, резина тунӑ ҫӗре каякан кӑпчанкӑ тымарӗсене пухатпӑр.

Июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне 38-мӗш, 40-мӗш тата 41-мӗш вӑрман обхочӗсем кӑпчанкӑ тымарӗсем хатӗрлемелли ҫулталӑкри плана тултарчӗҫ. 38-мӗш обход (Лерицов юлташ) ҫулталӑкри плана 125 процент тултарчӗ. Анчах Орлов, Гаврилов лесниксен обхочӗсем ку ӗҫре кая юлса пыраҫҫӗ. Кӑпчанкӑ тымарӗсем хатӗрлемелли плана тырӑ вырма тухиччен пурнӑҫламаллах.

В. ФИЛИН,
Шӑхран лесничествин объезчикӗ.

Писатель, Совет Информаци Бюровӗн корреспонденчӗ Евгений Петров вилни ҫинчен пӗлтерни

Паллӑ совет писателӗ-орденоносец, Совет Информаци Бюровӗн корреспонденчӗ Евгений Петров (Евгений Петрович Катаев) хӑйӗн постӗнче вилни ҫинчен Совет Информаци Бюровӗ тарӑннӑн хурланса пӗлтерет.

СОВИНФОРМБЮРО.

СССР Совнаркомӗнче

Писателе Евгений Петрова пытарасси тата унӑн ҫемьине пенси памалла тӑвасси ҫинчен

ССР Союзӗн Совнаркомӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. Писателе, Евгений Петрова пытарассине государство шучӗ ҫине илес.

2. Евгений Петров писателӗн ҫемьине—арӑмне Валентина Леонтьевна Катаевӑна тата ачисене Петр Катаевпа Илья Катаева пӗр вӑхӑтлӑха 10.000 тенкӗ пособи памалла тӑвас.

3. Евгений Петров писателӗн ҫемьин членӗсене ҫакӑн чухлӗ персональнӑй пенси памалла тӑвас: арӑмне Валентина Леонтьевна Катаевӑна — ӗмӗрлӗхех кашни уйӑхра 500-шер тенкӗ; ывӑлӗсене Петр Катаевпа Илья Катаева—вӗсем 18 ҫула ҫитиччен кашни уйӑхрах 300-шер тенкӗ памалла тӑвас.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлӑ ӑмӑрту

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсет

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). «Большевик» заводӑн коллективӗ ҫӑмӑл промышленность халӑх комиссариачӗн предприятийӗсем хушшинче пуҫланнӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ. Вӑл продукци туса кӑларас, унӑн пахалӑхне лайӑхлатас тата хӑйне ларакан хакне йӳнетес тӗлӗшпе татӑклӑ обязательствӑсем илчӗ. Рабочисем ӗҫ тухӑҫлӑхне планпа палӑртнинчен 3 процент ӳстерме пулчӗҫ.

Чылай бригадӑсемпе цехсем халь хӑйсен обязательствисене ытлашшипех пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Кашни участокри ӗҫрех производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗкленӳ.

Николаев юлташ начальник пулса тӑракан цех коллективӗ, июнь уйӑхне лайӑх результатсемпе вӗҫленӗскер, хӑйне панӑ задание 120—140 процент тултарса ӗҫлет. Кунта ӗҫ нормине 120 процентран кая тултарса пыракансем ҫук. Паллӑ стахановец Алексей Закалябин хӑйӗн нормине куллен 250 процент тултарать. Юлашки уйӑхсем хушшинче Закалябин юлташ темиҫе рабочие хӑйӗн ӗҫ меслечӗпе ӗҫлеме вӗрентрӗ. Унпа пӗрле ӗҫлекен Степан Моторин та юлашки эрне хушшинче ӗҫ нормине икӗ хут ирттерсе тултарса ӗҫлерӗ.

Стахановец Иван Баранов Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса ӗҫ тухӑҫлӑхне 2,5 хут ӳстерсе ӗҫлеме сӑмах панӑ. Июль уйӑхӗнчи малтанхи кунсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Баранов юлташ обязательствӑна ытлашшипех тултарать. Ҫак кунсенче вӑл, пӗр йышши васкавлӑ заказа туса, нормӑна 350 процент тултарчӗ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе инженер Дорофеев ертсе пыракан цехри рабочисем те ҫӗнӗ результатсем кӑтартаҫҫӗ. Стахановец Иван Ширшов, акӑ, июнь уйӑхӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне виҫӗ хут ӳстерчӗ. Николай Денисов, вӑтамран илсен, 185 процент ӳстернӗ.

— Эпир юратнӑ Сталин юлташ пире фронта пулӑшса пыма чӗнсе каланине хамӑра панӑ ӗҫ заданийӗсене 2—3 хут ӳстерсе пурнӑҫланипе ответлетпӗр,— теҫҫӗ заводри стахановец-двухсотниксем.

Х. ЛИСИН.

Апат-ҫимӗҫ комбиначӗ хӑйӗн ӗҫне лайӑхлатрӗ

Канашри апат-ҫимӗҫ комбиначӗ юлашки уйӑхсенче хӑйӗн ӗҫне чылаях лайӑхлатрӗ. Иккӗмӗш квартал планне комбинат чылай ирттерсе тултарчӗ.

Комбинат пур йышши продуктсем кӑларас тӗлӗшпе те плана ытлашшипех тултарнӑ. Сӑмахран: премӗксем планран 21 процент ытларах, конфетсем тата лапшасемпе булкӑсем 5 процент ытларах туса кӑларнӑ. Планран ирттерсе 25 пин литр квас туса кӑларнӑ. Комбинатӑн цехӗсем ҫак иртнӗ кварталта пӗр чарӑнусӑр, туллин ӗҫленӗ.

Комбинат ҫак ҫитӗнӳсене мӗнле майпа тунӑ-ха? Чи малтанах ҫакна калас пулать: комбинатӑн управляющийӗ П. Захватова тата местком председателӗ Н. Тумашек юлташсем хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнланса илнӗ, ӗлӗкхинчен лайӑхрах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Цехсенче тасалӑхпа большевикла йӗркелӗх тунӑ. Рабочисемпе работницӑсем Шупашкарти апат-ҫимӗҫ комбиначӗн коллективӗпе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ. Хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм вӑйпа ӗҫлеҫҫӗ. Ыран тумалли ӗҫе сменӑра ӗҫ пӗтиччен парса хураҫҫӗ. Смена мастерӗсемпе бригадирсем вӑл задание ӗҫ пӗтнӗ хыҫҫӑн рабочисене ӑнлантарса параҫҫӗ.

Ҫаксене пула конфеткӑсем кӑларакан цех (бригадирӗ Антропова юлташ) кӑйӗн кулленхи ӗҫ планне тӑтӑшах 154 процент тултарса пырать. А. Терентьева, А. Сергеева, К. Горбунова работницӑсем кулленех 2-шер норма туса ӗҫлеҫҫӗ. Никитина юлташӑн бригадинчи А. Севастьянова, И. Гурьева, Григорьева работницӑсем те хӑйсен нормине 150—200 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Работницӑсемпе рабочисен социализмлӑ ӑмӑртӑвне комбинатӑн месткомӗ лайӑх ертсе пырать. Опытлӑ работницӑсем хӑйсен мастерлӑхне ҫӗнӗ работницӑсене вӗрентсе параҫҫӗ. Вӗсен пуҫарӑвӗпе комбинат килти майпа лапша туса кӑларма тытӑнчӗ.

П. НИКОЛАЕВ.

Июлӗн 4-мӗш. (Хамӑр корр.).

Ҫул тунӑ ҫӗрте

СӖНТӖР. Юнга ялсоветне кӗрекен «Родник» колхоз ҫул тунӑ ҫӗрте тӑрӑшса ӗҫлет. 55 ҫулти колхозница Т. Яндимиркина нормӑна 150 процент, Е. Петрова 200 процент, А. Яндушкина 150 процент тултарса пыраҫҫӗ. Ҫул тӑвас ӗҫре ваттисемпе пӗрлех шкул ачисем те тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. А. Яндушкин, Л. Ефремова, А. Ершова кулленхи нормӑна 125—150 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Ф. ЯНДУШКИН.

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Колхозниксен хастарлă ĕçĕ

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ пире хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара, фронта пулăшса тăрассине куллен вăйлатса пыма чĕнет. Аслă çулпуçăн чĕнĕвне пирĕн «Комбайн» колхоз членĕсем колхоз производствинче тимлĕн ĕçлесе ответлеççĕ.

Пирĕн колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. Çĕртме сухине, тислĕк кăларассине тата çум çумлассине те эпир, пур колхозниксем те ĕçе организованно хутшăннипе, кăтартнă срокченче вĕçлерĕмĕр. Çĕртме сухине эпир 722 гектар çинче июнь уйăхĕн вĕçĕнчех туса пĕтертĕмĕр. Çав вăхăт тĕлнеллех йĕтĕн, тулă, сĕлĕ, пăри лаптăкĕсене çумкурăкĕсенчен тасатрăмăр.

Сулăйĕр строительствинче те пирĕн колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕр чавас-купаласс тĕлĕшпе хамăра панă плана эпир июнĕн 28-мĕш тĕлне тултартăмăр. Кунсăр пуçне тата «Большевик» завода вутă турттарса патăмăр.

Колхозра пур ĕçре те хĕрарăмсем малта пыраççĕ. Чылай ĕçсенче нормăна çĕр процентпе кăна мар, ытлашшипех тултараççĕ. Акă Евдокия Кудрявцевăнах илер. Унăн 4 ача, анчах вăл нихăçан ĕçрен те юлмасть. Уйрăмăнах вăл çум çумлас ĕçре лайăх тĕслĕх кăтартрĕ. Ĕçе ирхине ирех тухса сĕм тĕттĕмпе пулсан çеç таврăнса, нормăна вăл 120—150 процент тултарса пычĕ.

Ксения Яркеева, Пелагея Мальцева т. ыт. колхозницăсем те ĕçе активлăн хутшăнаççĕ, стахановла ĕçлеççĕ.

Халĕ эпир тырпула пухса кĕме хатĕрленетпĕр. Ку тапранчен 250 çурла, 200 çава юсаса хатĕрлерĕмĕр, çитес кунсенчех жнейкăсене те юсаса пĕтеретпĕр. Тырă вырма эпир пур колхозниксене те явăçтаратпăр. Ĕç организованно пулса пытăр тесе столовăй тата ясли организацилетпĕр. Ку енĕпе кала лех кирлĕ продуктсем хатĕрлетпĕр.

Я. ЯРАНСКИЙ.
Сĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхоз председателĕ.

Ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарассишĕн

Партипе правительство «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановление Çĕрпÿ районĕнчи «Пучах» колхозра тĕплĕн сÿтсе яврĕç. Хальхи вăхăтра вăл постановление чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхозниксем колхозра тăрăшса ĕçлени отечественнăй аслă вăрçăра Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу панине тĕплĕн ăнланса илчĕç. Вĕсем пĕтĕм вăя колхоз ĕçне тĕплĕн, пысăк пахалăхпа тăвас ĕçе хураççĕ. Акă, Мария Лаврентьева, ача амăшĕ, çуракинче пĕр кун юлмасăр ĕçлерĕ. Вăл çĕртме сухине тунă çĕрте те кулленех ĕçлет, ĕç нормине тултарса пырать. Герасимова Мария арçын ĕçĕнче те ĕçлет. Вăл ĕçе вăхăтра тухать, пĕр кун та ĕçсĕр лармасть. Филиппов Роман, Романов Василий тата ытти вуншар колхозниксем пĕрремĕш срокра тумалли ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарнă.

Ĕçкунĕсен минимумне тултарас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозниксемпе колхозницăсене вăхăтра асăрхаттарнă тата вĕсене ытларах ĕçе хутшăнтарма тăрăшнă. Çавна пула ачаллă хĕрарăмсем те ĕçкунĕсен минимумне тултарса пыраççĕ. Колхоз инçетри ĕçе хутшăнма пултарайман ачаллă колхозницăсене ĕçсĕр лартман. Акă, Павлова Матрена, виçĕ ача амăшĕ, фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет.

Йывăр ĕçре ĕçлеме пултарайман колхозниксене пахча-çимĕçсен хуралне тăратнă. Ĕç вăйĕпе пĕлсе усă курни колхоза ĕçе вăхăтра тата пахалăхпа туса пыма пулăшать.

М. ЯКОВЛЕВ.

Шкул ачисемпе учительсем хирти ĕçре

Сталин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен пионерсемпе шкул ачисем çинчен колхозниксем ырă кăмăлпа калаççĕ. Çав ачасем вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕ хыççăнах колхоз ĕçĕсене активлăн хутшăннă. Халĕ ку колхозăн хирĕсенче кулленех 300 çамрăк ача ытла ĕçлет.

6-мĕш класа куçнă А. Толстов малтанхи вăхăтра колхозра пĕчĕк ĕçсене тунă: кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, çуракинче вăл сÿреçĕ пулса ĕçленĕ. Июлĕн 1-мĕш тĕлне унăн ĕç кĕнеки çине 45 ĕçкунĕ çыраннă. Çавăн пекех Вася Исаев, Миша Колпаков, Петя Аблесов, Маня Мешкова пионерсем те, вăйпитти колхозниксем пекех, обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне пĕрремĕш срокра тултарнă. 12 çулти Вера Урукова кăçал 80 ĕçкунĕ [illegible] бригадира сăмах панă. Çамрăк патриот хăйĕн сăмахне çирĕп тытать. Халĕ вăл пĕр ĕçрен те юлмасть. Пĕрремĕш бригадăра ĕçлекен Тоня Шилова, Петя Армянов, Поля Белкова, Оля Сорокина пионерсем те мухтава тивĕçлĕ ĕçлеççĕ.

— Правительство шкул ачисемпе учительсене колхозсенчи ĕçсене мобилизацилеме йышăннă постановленине эпир, шкулта ĕçлекенсем, чыслăн пурнăçласа пыратпăр,—тет учительница Валентина Александровна Урукова, колхозри парторганизацин секретарĕ. Вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕренпе Е. Сачкова, М. Гордеева, К. Мартышкина, С. Лысова учительницăсем 20—25-шер ĕçкунĕ тунă. Е. В. Сачкова юлташ колхозăн пахча-çимĕç бригадинче ĕçлет; вăл 30 ĕçкунĕ ытла тунă.

Шкул ачисем колхозра хăйсен бригадисенче ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕçре учительницăсем ертсе пыраççĕ. К. И. Мартышкина юлташ 1-мĕш бригадăри ачасемпе ĕçлет. Кану вăхăтĕнче политикăллă-массăллă ĕç тăвать.

[illegible]

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКИ р-н, июлĕн 3-мĕш. (Хамăр корр.)

Пулă пĕвине пысăклатнă

Шăлаçăн районĕнчи «Новый путь» колхоз кăçал пулă пĕвине тата пысăклатрĕ. Колхоз çак пĕвере пулă тытса кашни çулах [illegible] нумай илет. Тырă вырнă вăхăтра тата ытти ĕç вăхăтĕнче те колхоз колхозниксене пулă апачĕ [illegible].

Т. ВОЛКОВ.

КОМСОМОЛЕЦСЕН ПРИМЕРĔ

[illegible]

Г. СУЕВ.
«Тимĕр çырма» колхозри (Ишлей р-нĕ) комсомол организацийĕн секретарĕ.

Çĕнĕ пуçламăш организаци туса йĕркеленĕ

[illegible]

М. КУСТИКОВ.

Севастополе паттăррăн хÿтĕленĕ çынсен чапĕ нихăçан та тĕксĕмленмĕ

Севастополе хÿтĕлени вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕш. (ТАСС). Англире тухакан хаçатсем Севастополе хÿтĕлекен вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен çыраççĕ, ăна хÿтĕлекенсен паттăрлăхне пысăк вырăна хураççĕ. Англин информаци министерстви хăйĕн пĕлтерĕвĕнче çапла калать: Лондонра Севастополе хÿтĕлекенсен кĕрешĕвне хисеплесе ун умĕнче пуçа таяççĕ, Севастополе хÿтĕлекенсем Германин нумай дивизийĕсене тата Германин сывлăш-çар вăйĕсен чылай пысăк пайне хăйсем патĕнчен ямасăр тытса тăчĕç, противника питех те пысăк çухатусем кÿчĕç. Севастополь крепоçĕ питĕ вăрах хирĕç тăни ытларах та çак енчен паха: ăна хÿтĕлекенсем нимĕçсен планĕсене арпаштарса ячĕç. (Информаци министерстви çакна кăтартса парать: çавăн пек чаплăн хирĕç тăнăшăн Англи халăхĕ Севастополе хÿтĕлекенсене тав тăвать, çавăн пек хирĕç тăнипе нимĕçсен вăхăт та нумай çухални тата вĕсем сынпа пурлăх тĕлĕшĕнчен те пысăк çухатусем тÿснĕ. «Таймс» хаçат хăйĕн Севастополе хÿтĕлени çинчен калакан умстатьинче çапла çырать: «Севастополе хÿтĕлени пирĕн пĕрлехи ĕçе питĕ чаплă пулăшнине эпир тивĕçлипе хисеплетпĕр. Севастополь вăл вĕçĕ хĕррисĕр хастарлăха пĕлтерекен ят пулса тăчĕ, ăна хÿтĕлени Германин планĕсене пĕр шеллемесĕр арпаштарса ячĕ. Нумай вăхăт хушши Севастополь захватчиксене хирĕç тăратса хунă хĕç пек тăчĕ». Çав хаçат Севастополе хÿтĕлекенсем ытла та йывăр условисенче кĕрешнине палăртать. Нимĕçсем Севастопольшĕн çынсемпе те, вăхăтпа та питĕ хаклă тÿлерĕç. Вăл çухатусене сапламa çук, тет.

«Ивнинг стандарт» хаçат çапла çырать: çак вăрçăра нумай хуласем хăйсен паттăр оборонипе чапа тухрĕç. Анчах та вĕсем, чапа тухнăскерсем, нумай вăхăт хушши çавăрса илнĕ ункăра тăнă Севастополе тивĕçлипе хисеплеççĕ. Севастополе хÿтĕлекенсем йăсăрланса вырткан иштĕлчĕкĕн капти аршăнне хÿтĕленĕ. Çавăн пек ĕнтĕ вăл Севастополь. Унăн этем тивĕçлĕхĕшĕн кĕрешсе илнĕ чапне нимĕн те тĕксĕмлетеймĕ. Севастополь темиçе уйăх хушши çирĕп тăрса хăйĕн хастарлăхĕпе пĕтĕм этемлĕхе çутатса тăчĕ. «Англире, — тесе çырать хаçат, — Англи халăхĕ Севастополь пек кĕрешме тата унăн мухтавне малалла тăсма пултарасси тĕлĕшпе иккĕленме пултаракан пĕр çын та пулмалла мар, çак йывăр кунсенче пирĕн те çавăн пекех кĕрешмелле».

«Ньюс кроникл» хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çырса тăракан сотрудникĕ —Севастополе хÿтĕлениe нумай ăру асран ямĕ, тесе çырать.

«НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 4-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсемпе радиокомментаторсем çапла калаççĕ: Севастополе чаплăн хÿтĕлени тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕншур халăхсемшĕн кĕрешÿре хавхалантаракан тĕслĕх пулса тăрать, теççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ Болдуин каланă тăрăх, Севастополе хÿтĕлени историе ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ. Хулана хастарлăн хÿтĕленĕ çынсем нимĕçсене пысăк çухатусем кÿчĕç тата Совет Союзне хаклă вăхăт парĕç.

«Геральд» хаçат (Бостон) çапла çырать: «Севастополе хÿтĕлени хастарлăха пĕлтерекен паллă пулса тăчĕ. Вăл — пĕрлешнĕ çĕршывсем ку вăрçăра çĕнтерме пултарнине тата вĕсем çĕнтерессине кăтартса тăрать».

«Севастополе хÿтĕлекенсен хăюлăхне, çар мастерлăхне тата хастарлăхне пула, — тесе çырать «Газетт» хаçат (Штат Массачузетс), — противник Севастополе йышăнса илни, вăл çынсемнĕ çухатусен шайĕнчен шутласан, нĕ çухатусем шайĕнчен шутласан, питĕ пĕчĕк ăнăçу туни пулса тăрать. Севастополе хÿтĕлекенсем хăйсем улăпла тимлĕн кĕрешнĕ пĕтĕм вăхăт тăршшĕнче пысăкран та пысăк паттăрлăх тата халиччен нихăçан пулман хастарлăх кăтартрĕç».

«Сен» хаçат çапла калать: нимĕçсем Севастопольшĕн калама çук пысăк хак тÿлерĕç, мĕншĕн тесессĕн Севастополе хÿтĕлекенсем çав мухтавлă хулан геройла йăлисем тăрĕх çапăçрĕç.

Севастополе хÿтĕленин итогĕсем çинчен каласа, радиокомментатор Хиттер çакна кăтартса парать: Севастополе хÿтĕлени Гитлер ку вăрçăра мĕншĕн çĕнтерейменнине уççăн кăтартса парĕ. Гитлер хăшпĕр вырăнта ăнăçусем тума пултарĕ-ха, анчах та унăн çав ăнăçусемшĕн питех те хаклă тÿлемелле пулĕ. Севастополе хÿтĕлени тĕнче историйĕн геройла страници пулса тăрать. Вăл гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкас ĕçе пысăк пулăшу парĕ.

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 4-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан нумай хаçатсем, Севастополе хÿтĕленин итогĕсем çинчен каласа, ăна хастарлăн хÿтĕлекенсене тивĕçлипе хисеплесе çыраççĕ. «Гетеборгс Хандельстиднинг» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Севастополе хÿтĕлекенсен паттăрлăхĕ пĕтĕм тĕнчене хаваслантарчĕ».

«Социал демократен» хаçат Севастополе хÿтĕлекенсем ытла та вăйлăн хирĕç тăнине палăртать. «Осада вăхăтĕнче, — тесе çырать хаçат, — вырăс салтакĕ хăйĕн мĕншур паха енĕсене кăтартрĕ. Вăл, хăйĕн ĕçĕ тĕрĕссине ĕненсе, хавхаланса чи хăрушă условисенче тата чи пысăк йывăрлăхсенче кĕрешрĕ».

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер импер僅 çĕр çинчи тата сывлăшри вăйĕсем противника Эль-Аламейн районĕнче татах атакăланă. Противникăн бронетанковăй вăйĕсен Эль-Аламейнран кăнтăралла чакмалла пулнă. Çапăçура противникăн темиçе танкне стройран кăларнă. Англи авиацийĕ пуринчен ытла Эд-Даба районĕнчи войскăсен ушкăнĕсене тата самолетсем лармалли площадкăсене атакăланă.

Противникăн самолечĕсем çак иртнĕ çĕрле Суэц каналĕн районĕпе Александрия çине вĕçсе пырса тапăннă чухне Англи истребителĕсем противникăн 5 бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла пĕлтерет: Роммель Нилăн варри патне çитес тесе мĕншур вăйне хурать. Снабжени базисем аякра юлнине пăхмасăр, шыв çитменнине пăхмасăр, хăйĕн войскисем пушхирте нумай вăхăт хушши çапăçнипе ывăнса çитнине, вĕсен канма кирлине пăхмасăр, англичансем çĕнĕрен вăй илсе килнине пăхмасăр, Роммель хăйĕн çарĕн пурнăçне пĕр шеллемесĕр малаллах кайма тăрăшать.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эль-Аламейнран кăнтăрарахри районра пулса иртнĕ танксен çапăçăвĕнче англичансем 400 нимĕçе тыткăна илнĕ тата нимĕçсен темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Икĕ кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн Роммелĕн 15-мĕшпе 21-мĕш танковăй дивизийĕсем питĕ вăйсăрланса çитнĕ, вĕсем ĕнтĕ кашни хăй пĕччен атака тума пултараймаççĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: юлашки çапăçусенче Кăнтăр Африка войскисем итальянецсен «Литторио» ятлă моторизованнăй дивизине çĕмĕрсе тăкнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ЦЕЛЕБЕС УТРАВНЕ ТАПАННИ.

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен бомбардировщикĕсем, пĕр анса лармасăр 2.000 миля хушши вĕçсе кайса, Кендари аэродромне (Целебес утравĕ) атакăланă, Японин вуншар бомбардировщикĕсемпе истребителĕсене пĕтерсе тăкнă.

Франкфуртри çар заводĕнчи пăлханусем

ЖЕНЕВА, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: «Франкфуртри çар завочĕсенчен пĕринче чылайранпа ĕнтĕ сиенлĕ сас-хурасем, уйрăмах Германи командованийĕпе унăн союзникĕсем пирки калакан сас-хурасем сарăлни палăрать. Çав сас-хурасем рабочисем хушшинче хумханусем кăлараççĕ».

Германин влаçĕсем заводри работника Генрих Мааса арестленĕ. Ăна «вăл тăтăшах неприятелĕн радиостанцийĕ панă хыпарсене итленĕ тата çав хыпарсем çинчен заводри рабочисене пĕлтернĕ», тесе айăплаççĕ. Ытти рабочисем хăйсем енчен Маасран илнĕ хыпарсене малалла сарнă. Мааса вĕлермелле приговор йышăннă, ыттисене вара нумай вăхăтлăха тĕрмене хупмалла тунă.

Хлебокомбинату срочно требуются на постоянную работу: плановик-экономист, секретарь-машинистка, зав. пекарней за Волгу.

ВУРНАРСКАЯ ШКОЛА СРЕДНЕГО СЕЛЬХОЗОБРАЗОВАНИЯ
об'являет прием на 1942—43 учебн. год.

Школа готовит техников сельского хозяйства.

Срок обучения 2 года. В школу принимаются граждане в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие подготовку не ниже НСШ.

Прием заявлений производится с 1-го июля по 25 августа. К заявлению прилагаются:
1) Свидетельство об окончании НСШ.
2) Свидетельство о рождении.
3) Справка о состоянии здоровья.
4) Две фотографические карточки.
5) Справка об отношении к воинской обязанности.

Окончившие в 1941—42 году НСШ, а также лица, демобилизованные из рядов РККА, независимо от времени окончания НСШ принимаются без испытаний, остальные подвергаются испытаниям по программе НСШ. Дети военнослужащих от оплаты за обучение освобождаются. Отличникам выплачивается стипендия 70 рублей.

Адрес: ЧАССР, Вурнары, Советская, № 35.

ДИРЕКЦИЯ.

Германия оккупациленĕ территори çине Америкăн бомбардировщикĕсем вĕçсе пырса тапăнни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх Америкăн 6 бомбардировщикĕ Германия оккупациленĕ территори çине вĕçсе пырса тапăннă. 2 самолет хăйсен базине таврăнман.

Америка летчикĕсем Европăра пĕрремĕш операци тунă ятпа Гаррис янă послани

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка летчикĕсем Европăра пĕрремĕш операци тăвас умĕн Англин бомбардировочнăй авиацийĕн командующийĕ авиаци маршалĕ Гаррис Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен бомбардировочнăй авиаци командующийĕ патне çакăн пек çыру янă: «Пирĕн икĕ халăх июлĕн 4-мĕшне тахçанах ĕнтĕ никама пăхăнманлăх кунĕ тесе уявлаççĕ. Ырантан çав кун çĕнĕ ĕçпе паллă пулса юлать. Çав кун Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен летчикĕсем Европăри противник оккупациленĕ территори çине Америка самолечĕсем çинчен малтанхи бомбăсем пăрахаççĕ. Çакăн хыççăн пирĕн атакăсен хăвачĕ тăтăшах ÿссе пырĕ, ун чухне вара Германия хăй пĕтĕм тĕнчене вăрçа туртса кĕртнĕ куна ылханмаллипех ылханĕ. Сире тата операцире пулнă çынсене пурне те эпĕ ăнăçу сунатăп. Сирĕн паттăр та хастар çамрăксем тăшмана пĕтерсе тăкассине эпĕ пĕлетĕп».

Гитлеровецсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсене çаратаççĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Германире тырă начар пулассин паллă пулнă май гитлерла влаçсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсене тата Италие çĕнĕ тырпула ытларах тăратма хушса хĕсе пуçланă. Венгри правительстви, тырра ытти çĕре яма май парас мар тесе, ăна халăхран тырă çапнă чухнех туртса илмелли çинчен калакан постановлени йышăннă. Хресченсем тырра государствăн ятарласа уйăрса хунă контролерĕсем умĕнче çеç çапма пултараççĕ, çав контролерсем вара тырă мĕн чухлĕ тухнине тĕплĕн шутласа хураççĕ те ăна туртса илеççĕ. Хресченсене хăйсем валли тырă питĕ сахал хăвараççĕ.

Италипе Словакире те çавăн пекех тăваççĕ. «Корриере делла Серр» хаçат çапла çырать: фашистсен ялхуçалăх корпорацийĕсем «хресченсене мĕншур тĕштырра юлашки килограмм юлмиччен пама хистемешкĕн» пысăк кампани пуçласа янă.

Словаки правительстви нимĕçсем хушнипе «пĕтĕм çĕнĕ тырра туртса илме» решени йышăннă. Румынире те çавăн пекех тăваççĕ. Гитлеровецсем çавăн пек çаратнине пула, «Дейче цейтунг ин Кроатиен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румынире çăкăр памалли нормăна июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа нумай чакарнă. Влаçсем хресченсенчен юлашки кукурузăна туртса илеççĕ. Румыни влаçĕсем çĕнĕ тулла пĕтĕмпех Германие пама сăмах панипе çав кукурузăна халăха тулă вырăнне памалла.

Хорватире гитлеровецсене продовольствие илсе кайма йывăр килнĕ. Хорватие вĕсем ĕнтĕ йăлтах çаратса пĕтернĕ, Хорватин нимĕнле запас та тăрса юлман. Çураки начар иртнипе тата çанталăк начар тăнипе Хорватире тырă лайăх пулассине шанма та çук. «Дейче цейтунг ин Кроатиен» хаçатăн «çĕршывăн экономикăллă пурнăçĕ питех те йывăррине» тата Германие продовольстви ытларах илсе кайма çуккине ирĕксĕрех йышăнма тивнĕ.

ЧЕХСЕНЕ ЙЫШЛĂН АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Виширан илнĕ хыпарсем çине кăтартса çапла пĕлтерет: Прагăпа Брнора (Чехословакия) тата 141 чеха асаплантарса вĕлернĕ. Гейдриха вĕлерме тапăннă хыççăн ĕнтĕ мĕншурĕ 1000 чеха ытла асаплантарса вĕлернĕ. Вăл шута Либицра асаплантарса вĕлернĕ 200 чех та, Лещакире персе вĕлернĕ 250 чех та кĕмеççĕ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче нимĕç шпионĕсене суд тăвасси

ВАШИНГТОН, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рузвельт 8 нимĕç шпионĕн ĕçне пăхса тухма 7 генералтан çар комиссийĕ тунă. Çав нимĕçсем Нью-Йорка тата Флорида штатне подводнăй лодкăсенчен анса пынă, вĕсем Америкăн Пĕрлешÿллĕ Штачĕсенчи стратегиллĕ центрĕсенче диверсиллĕ ĕçсем тума аннă. Çав процесс Вашингтонра июлĕн 8-мĕшĕнче пуçланать.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, правительство çав шпионсене персе вĕлермелле приговор йышăнма хушĕ тесе шутлаççĕ.

ГЕТЕБОРГРА ГИТЛЕРЛА ШПИОНСЕН УШКĂННЕ ТЫТНĂ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Гетеборгра виçĕ çынна арестленĕ, вĕсене ютçĕршывшăн шпионла ĕçсем тунăшăн айăплаççĕ. Çак ушкăн пĕтĕмпех нацистсенчен тăрать тесе шутлаççĕ. Кунта палăртнă тăрăх, çуркунне Гетеборгран тухса Англие каякан пароходсене, Норвеги парохочĕсене, Çурçĕр тинĕсĕнче путарни çак ушкăнăн ĕçĕ пулнă.

Шыраса тупнă шпионла организацин пуçлăхĕ таможеннăй чиновник Сванберг пулнă. Çак ушкăна Швеци полицийĕ çулталăк ĕнтĕ шыранă.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăвашсен Государство Издательстви çакăн пек çĕнĕ кĕнекесем кăларчĕ:

Стихван Шавлы. ЙЫХРАВ. Чăвашгосиздат, 1942 ç., тиражĕ 1000 экз., 64 стр., хакĕ 2 тенкĕ.

«Йыхрав»—сăвăсен пуххи. Сăввисенче автор мухатвлă Хĕрлĕ Çарăн иксĕлми вăйне тата тылри халăх Хĕрлĕ Çара мĕнле пулăшса тăнине кăтартать.

М. Данилов—Чалдун. ТАЙГА ПАТТĂРĔСЕМ. Чăвашгосиздат, 1942 ç., тиражĕ 2.700 экз., 72 стр., хакĕ 1 т. 40 пус.

Кĕнекере икĕ калав. Калаври геройсем—граждăн вăрçи вăхăтĕнче Çĕпĕрте шуррисене хирĕç паттăррăн çапăçнă партизансем. Калавĕсене вулама çăмăл, ăнланмалла чĕлхепе çырнă.

Л. Толстой. КАВКАЗРИ ТЫТКĂНРА ПУРĂННИ. Чăвашгосиздат, 1942 ç., тиражĕ 4.000 экз., 40 стр., хакĕ 1 т. 20 пус.

Кĕнекене «Шкул библиотеки» серипе кĕçĕн çулхи ачасем валли картинсемпе илемлетсе кăларнă. Çак паллă произведенире автор ĕлĕкхи самантра икĕ вырăс офицерĕ Кавказ тыткăнĕнче мĕнле пурăннине кăтартса панă.

Вăтам ĕмĕрсен историйĕ. — Профессор Е. А. Косминский редакциленĕ. Чăвашгосиздат, 1941 çул, 312 стр., тиражĕ 30.000 экз., хакĕ переплетпа 5 тенкĕ те 50 пус.

Асăннă кĕнеке вăтам шкулсенчи 6 — 7-мĕш классенче вĕренекен ачасем валли кирлĕ учебник пулса тăрать. Учебникра тăватă раздел: 1) Малтанхи вăтам ĕмĕрлĕх, 2) Европăпа Азия XI — XV-мĕш ĕмĕрсенче, 3) Каярахри вăтам ĕмĕрлĕх, 4) Çĕнĕ самана пуçламăшĕ. Чăвашла куçарнине Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ырласа çирĕплетнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КАНАШСКИЙ ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ
об'являет набор учащихся на 1942—43 учебный год.

Техникум готовит инспекторов и бухгалтеров по бюджету и налоговым платежам.

Окончившие работают в финансовых органах (облфо, райфо, горфо и др.) с окладом 450—700 руб.

Срок обучения в техникуме 2 года.

В техникум принимаются без испытаний: окончившие в 1941 и 1942 г.г. НСШ или 7 классов средней школы на I курс и окончившие 9—10 классы средней школы на II курс. Лица, получившие указанное образование до 1941 года, подвергаются приемным испытаниям. Отличники принимаются без испытаний независимо от времени окончания школы.

В техникум принимаются лица в возрасте от 15 до 30 лет.

Прием заявлений производится с 1-го августа 1942 г.

К заявлению прилагаются следующие подлинные документы:
а) свидетельство о рождении,
б) свидетельство об окончании неполной средней школы или о сдаче экстерном за 7 классов средней школы,
в) справка о здоровьи,
г) три фотокарточки,
д) паспорт (пред'является лично),
е) военнообязанные (пред'являют лично) военный билет.

Начало занятий с 1-го сентября 1942 года.

Отличники с 1-го сентября зачисляются на стипендию.

Принятые в техникум обеспечиваются общежитием или квартирой.

Плата за обучение 150 рублей в год.

Дети пенсионеров и мобилизованных в РККА от платы за обучение освобождаются.

Заявления и запросы направлять лично или почтой по адресу: г. Канаш, ЧАССР, ул. Ленина, 23 (во дворе) ФЭТ.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци — 0—85, издательство конторин — 0—23, комсомол пурнăç пайĕн секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 1289

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64